Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

89 (7514) № ✻ Юн кун, 2007 ҫулхи октябрĕн (юпа) 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров район активĕпе тĕл пулнинчен**

## Пĕр-пĕрне ăнланса ĕҫлесен, пурнăҫ лайăхланĕ



Ҫулсеренех ҫуллахи-кĕркуннехи ĕҫсене туса ирттернĕ хыççăн пирĕн районта Тыр-пул уявне ирттересси ырă йăлана кĕчĕ. Районта пурăнакансем ăна кĕтеççĕ. Кăçалхи ҫак уяв вара районта пурăнакансемшĕн яланлăхах асра юлĕ, мĕншĕн тесен Муркашсене ҫак ятпа саламлама Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров килчĕ. Ҫак кун йĕркеленĕ нумай мероприятине хутшăннипе пĕрлех Николай Васильевич район администрацийĕн ларусен залĕнче район активĕпе ĕҫлĕ тĕл пулу ирттерчĕ. Унта предприятисемпе организацисен ертӳҫисем, ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсем, депутатсен районти Пухăвĕн тата ял тăрăхĕсен депутачĕсем, вĕрентӳ, медицина, культура ĕҫченĕсем хутшăнчĕҫ. Президентпа пĕрле ентешĕмĕр Раççей Геройĕ Е. Г. Борисов та пулчĕ.

–Паян сирĕн районта уяв. Тин кăна Апаш тăрăхĕнче ҫĕнĕ ҫул уçрăмăр. Ун хыççăн Тыр-пул уявĕнче ĕҫре малта пыракансене патшалăх наградисене патăмăр, – пуҫларĕ хăйĕн сăмахне Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров. – Уяв кунĕ пулин те, сирĕн районти ял хуҫалăх ҫулне пĕрле пĕтĕмлетни ытлашши пулмĕ. Ҫулталăк вĕҫленсе пырать, ноябрь умĕн малтанхи пĕтĕмлетӳсем тума пулатех.

Мĕн тунă ҫак таранччен, малалла мĕн тумалла тата мĕнле ĕҫлемелле? Акă, мĕнле ыйтусем тавра калаҫрĕҫ ҫак кун Президентпа зала пуҫтарăннисем.

Мĕн тумаллине илес пулсан вара вĕсенчен пĕри Николай Васильевичăн малтанхи сăмахĕсенченех палăрать.

–Ҫитес ҫул пирĕн сирĕнпе кашни ял патне автомобиль ҫулĕсене туса пĕтермелле. Ҫакна валли кăна Чăваш Республикине 9 миллиард тенкĕ укҫа килчĕ. Кунпа ҫеç ĕҫ вĕҫленмест-ха.

Николай Васильевич малалла республикăна тата 5 миллиард тенкĕ укҫа килмеллине палăртрĕ. Ҫак суммăна халиччен тунă ҫулсене юсама уйăраççĕ, ҫав шутран Муркаш районĕнчи ҫулсене юсама та. Палăртмалла, ҫул ҫинчи шăтăк-ҫурăксене питĕрме мар, ҫулсене тĕплĕн юсама.



Астăватăр пулĕ Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров Чăваш Республикинчи автомобиль ҫулĕсене туса пĕтерессине хăвăртлатасси ҫинчен калакан Указа хăҫан кăларнине. Иртнĕ ҫулхи август уйăхĕнче. Ҫав вăхăтран пуҫласа кăҫалхи июль уйăхĕччен кăна Чăваш Республикинчи ҫул тăвакансем 1 пине яхăн единица асфальт ҫул тăвакан техника туяннă, самосвалпа КамАЗран пуҫласа бульдозер, асфальт хуракан техника таранах. Ытларахăшне ют ҫĕршывра туса кăларнă: Австринче, Германинче.

Николай Васильевич ҫавăн пекех ҫак вăхăт хушшинче республикăра 30 яхăн асфальт тăвакан заводсем туса лартнине палăртрĕ:

– Пур ҫĕрте те йĕркеллĕ ҫулсем туса пĕтермесĕр чарăнмастпăр, – терĕ Президент. Нумаях пулмасть эпĕ Республикăри хула округĕсенчи ҫулсене юсамалли пирки Указ ҫине алă пусрăм.

Николай Васильевич ҫул тăвас ĕҫ питĕ усăллă тата тупăшлă пулнине палăртрĕ. Раççейри нихăш регионта та пирĕн Чăваш Республикинчи пек ҫул-йĕре кун пек нумай тумаççĕ. Ку вара пире укҫа ĕҫлесе илме май парать. Раççей шайĕнчи ҫул тумалли тĕрлĕрен конкурссенче ҫĕнтерсе, тĕрлĕ регионсенче ҫул тăвас ĕҫе хутшăнма май парать. Халĕ Раççей Федераци шайĕнче ҫул тума укҫа-тенкĕ нумай уйăраççĕ. Ку вара – пирĕн республикăри строительство организацийĕсене укҫа ĕҫлесе илмелли меслет. Ҫав сумма республикăна килсе, тĕрлĕ отрасльсене ытларах аталантарма май парать, ҫавăн пекех ĕҫ укҫине ӳстерме те.

Чăваш Республикин Президенчĕ малалла ҫитес ҫул республика кунне Муркашра та ирттерме йышăнни ҫинче чарăнчĕ. Ҫапла майпа Муркаша ҫитес ҫул тĕрлĕрен регионсемпе ют ҫĕршывсенчен нумай хăнасем килеççĕ.

– Вĕсене тивĕҫлипе кĕтсе илмелле. Ҫакна валли сире укҫа-тенкĕпе пулăшатпăр. Кун пирки эпир Юрий Александровичпа калаҫрăмăр, – палăртрĕ Николай Васильевич. – Сирĕн задача вара – бизнес-плансем хатĕрлемелле, хăвăрăн территорине кăтартмалла, хăвăр чăн-чăн ҫĕр хуҫи пулнине ҫирĕплетмелле, хăнасене хăвăрпа ĕҫлеме кăсăклантармалла. Ҫапла майпа вĕсемпе пĕрлехи предприятисем йĕркелеме майсем, района укҫа-тенкĕ килес ҫĕнĕ ҫулсем уçăлаççĕ.

(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).

**Сăн ӳкерчĕксенче: район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов ЧР Президентне Н.В. Федорова Муркашпа паллаштарать; Муркаш тăхлачисенчен Президента – кучченеҫ.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Республикăра**

## Экономика аталанни бюджет тупăшне ӳстерет

Республикăн кăҫалхи бюджетне виççĕмĕш хут пысăклатĕҫ. Ҫакăн пирки Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров республика правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳҫисемпе ирттернĕ канашлура пĕлтернĕ.

Финанс министрĕ Николай Смирнов палăртнă тăрăх, кăҫал экономика ӳсĕмĕ курăмлă, предприятисен ĕçĕн кăтартăвĕсем лайăх, ҫакă бюджета хушма тупăш кӳрет. Унсăр пуҫне республика ертӳҫисем федераци органĕсенче ҫине тăрса ĕҫлени тата Чăваш Ен территорийĕнче федераци программисене ăнăҫлă пурнăҫлани те хушма тупăшсем кӳрет. Ҫак самантсене шута илсен, тенĕ Николай Смирнов, паян бюджет тупăшĕсене тата 2 миллиард та 486 миллион тенкĕлĕх ӳстерме май пур. “Ку – курăмлă ӳсĕм, эпир бюджетăн тупăш пайне малтанах йышăннă обязательствăсемпе танлаштарсан 35 процента яхăнах ӳстеретпĕр”, – палăртнă финанс министрĕ.

Бюджет тăкакĕсене 3 миллиард та 96 миллион тенкĕлĕх ӳстерме пăхнă. Хушма тупăшсемпе тăкаксен параметрĕсене Министрсен Кабинечĕн ҫитес ларăвĕнче пăхса тухĕҫ, республикăн Патшалăх Канашне ҫирĕплетме сĕнĕҫ.

Президент палăртнă тăрăх, хушма укҫа халĕ пурнăҫлакан тата республикăра пурăнакансен пурнăҫне лайăхлатас тĕллевлĕ проектсем валли кайĕ. Ҫапах укҫа ҫӳлтен ӳкмест, ăна производство отраслĕсемпе влаç пĕрле ĕҫлесе тăваççĕ, ҫавăн пекех укҫа уйăрассине пирĕн Патшалăх Думинчи “Единая Россия” фракцири депутатсем пулăшнипе федераци органĕсенче татса параççĕ.

(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).

**Официально**

## Вниманию зарегистрированных региональных отделений Всероссийских политических партий, участвующих на выборах депутатов Госдумы РФ 2 декабря 2007 года

**ГУП ЧР «Моргаушский издательский дом» сообщает, что согласно Федеральному Закону «О выборах депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации» 29 октября в 14.00 часов в редакции Моргаушской районной газеты «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» проводится жеребьевка по распределению бесплатной и платной печатной площади для опубликования предвыборных агитационных материалов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 9.**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*

Хаклăран та хаклă ҫыннăмăра – аннене, хунямана, асаннене – Кӳстерек ялĕнче пурăнакан **Любовь Васильевна МИХАЙЛОВАНА** 70 ҫулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Пурнăçу ҫăмăл килмерĕ пулин те, эсĕ кирек епле ĕçрен те хăраса тăмарăн, ĕмĕр тăршшĕпех тăван хуçалăхра ырми-канми вăй хутăн. Сана малашне те тапса тăракан ҫăл куç пек иксĕлми вăй-



хăват, нумай ҫул тăванусене савăнтарса пурăнма ҫирĕп сывлăх, тумхахсăр кун-ҫул, тулли телей сунатпăр. Ҫывăх тăванусене пулăшса пынăшăн сан вăй-хăвату ӳссе пытăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланччăр.

Такăр пултăр сан ҫулу ялан,
Пирĕншĕн эс хаклă ылтăнтан.
Пурăнма вăй-хал паран ялан,
Тав сана пуришĕн те чунтан.

Эпир сана юрататпăр, хисеплесе ҫĕре ҫити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, ывăлĕ, кинĕ тата мăнукĕсем.**

---



Хаклăран та хаклă мăшăра, юратнă аннене, хунямана, ырă кăмăллă асаннене – Шетмĕпуç ял тăрăхне кĕрекен Катăкуй ялĕнче пурăнакан **Зоя Митрофановна ВАСИЛЬЕВАНА** паян, октябрĕн 24-мĕшĕнче, 50 ҫул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Юбилей ячĕпе саламласа сана эпир мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, сĕтелӳ ҫăкăр-тăвартан, кĕрекӳ тăвансенчен ан татăлччăр, ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр тата нумай ҫул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕ, тăхлачисемпе хăтисем тата ҫывăх тăванĕсем.**

---

Юратнă мăшăра, аннене, кукамая – Ҫатракасси ялĕнче пурăнакан **Зинаида Тарасовна ЗАХАРОВАНА** 55 ҫулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, тулли телей, вăрăм кун-ҫул сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, кинĕ, 3 мăнукĕ, тăванĕсем.**

**Хресченĕн ĕç кăшăлĕ пĕрлехи уява çаврăнчĕ**

## Кĕр мăнтăрĕ кашнинех савăнтарчĕ, ҫĕнĕ шухăш ҫуратрĕ

Нумаях пулмасть-ха тырă-пулăпа кашланă хирсем паян хăшĕ канура, хăшĕ кĕрхи культурăсен симĕс пусми айĕнче. Хресчен те уй-хир ĕçĕнчен пушанчĕ, анчах вăл канлĕх серепинче мар. Ĕнер кăна-ха тыр-пул пухса кĕртни ҫĕр ĕçченне паян иртнĕ ҫитменлĕхсем пирки шухăшлаттарать те ҫĕнĕлĕхсем ҫине пăхтарать, мĕн туса илнипе тулăх савăнма май туса парать. Ĕҫлекенĕн пӳлми те тулли паян, выльăх-чĕрлĕхĕ те ыранхи куна шанчăклă пăхма май парать, кĕреки те тулăх. Халĕ калани иртнĕ шăмат кун ума килчĕ: Муркаш пĕр кунлăх кĕрхи пуянлăх ытамне кĕрсе ӳкрĕ.

Тыр-пул уявĕ... Пур-ши унран савăкки ҫĕр ĕҫĕпе пурăнаканшăн? Ҫук. Ҫавăнпах ĕнтĕ иртнĕ шăмат кун район центрĕнче ял хуҫалăхĕнче тата продукци тирпейлекенсен кунне халалласа ирттернĕ кĕрхи уява район хастар хутшăнчĕ. Унта кашниех хăйĕн ĕçри ҫаврăнăçулăхне кăтартрĕ, ирхи шуçăмран каçхи шуçăмччен ĕçлесе тунă ӳсĕмĕпе паллаштарчĕ. Уяв Муркашсемшĕн çеç мар иккенне ҫак кун пирĕннисем хушшинче кӳршĕллĕ районсемпе хамăрпа тачă ҫыхăну тытакан предприятисен ертӳҫисем пулнипе пĕрлех республикăмăр Президенчĕ Н. Федоров пулни те ҫирĕплетсе парать.

– Муркашсен сĕтелĕ тулăххи паян яр уççăн курăнать. Ҫак пуянлăх вăл пĕр ҫын ĕçленипе пулман. Кунта район ертӳҫин те, хуçалăх председателĕпе агрономăн тата зоотехникăн та, хирте ĕçлекен рядовой ĕçченпе механизаторăн та, ĕне сăваканпа сысна пăхаканăн та тӳпи пур. Паян кĕлетсемпе хранилищĕсем уй-хир продукцийĕпе, сарайсемпе витесем выльăхпа тулăх пулнишĕн пурсăра та тав, – терĕ Николай Васильевич ĕçре палăрнисене хаклă парнесемпе Хисеп хучĕсем панă май.

(Вĕҫĕ 3-мĕш стр.).

**ЦЕНТРАЛЬНАЯ ИЗБИРАТЕЛЬНАЯ КОМИССИЯ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ ПОСТАНОВЛЕНИЕ**

18.10.2007 г. № 9/84-IV

г. Чебоксары

**О назначении членов Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса**

В соответствии с пунктом 6 статьи 26, пунктом 11 статьи 29 Федерального закона “Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации” Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики постановляет:

1. Назначить членами Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса:

Григорьеву Федосию Валерияновну – 1969 года рождения, образование высшее, главного бухгалтера МУП “Управляющая компания ЖКХ” Моргаушского района Чувашской Республики; предложенную в состав комиссии собранием избирателей;

Мизурова Юрия Алексеевича – 1958 года рождения, образование высшее, пенсионера, предложенного в состав комиссии Чувашским региональным отделением политической партии “ЛДПР”.

2. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

**Председатель Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики Л.Н. ЛИНИК.**

**Секретарь Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики Е.Б. ШЕВЛЯГИНА.**

## Район хаҫатне малалла ҫырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем! «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата 2008 ҫулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма малалла ҫырăнтараççĕ.**

**Район хаҫатне 6 уйăха ҫырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Ҫитес ҫул та пĕрле пулар.**

**РАЙХАҪАТ РЕДАКЦИЙĔ.**